Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

74 (7605) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Октябрĕн 1-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери вАтă çынсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕпе чĕререн саламлатăп!

Аслă ăрури çынсене сума суни кашни халăхăн культурин тата ăс-хакăлĕн уйрăлми пайĕ. Эпир сире – тĕрлĕ йывăрлăхсене çĕнтерме пултарнă, çĕр-шывшăн ырми-канми ĕçленĕ çынсене – тав сăмахĕсем калатпăр. Эсир – Чăваш Енĕн мăнаçлăхĕ, унăн ылтăн фончĕ. Сирĕн пуян пурнăç опычĕ, ăс-хакăл тата вăйлă чун хавалĕ çамрăксемшĕн питĕ хаклă.

Патшалăхăн тата обществăн тивĕçĕ – ватă çынсемшĕн тăрăшнинче, вĕсем çине тимлĕх уйăрнинче. Чăваш Республикинче халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен программăсем, ветерансен организацийĕсем активлă ĕçлеççĕ, хальхи оборудованипе тивĕçтернĕ медицина учрежденийĕсем уçăлаççĕ. Çитес çул тĕрлĕ вăрçă ветеранĕсене сипленме республикăри клиника госпиталĕн çĕнĕ корпусне туса пĕтереççĕ.

Чăваш Еншĕн, унăн малашлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшнăшăн тайма пуç сире. Сире чунтан çирĕп сывлăх, ăнăçусем, вăй-хал, вăрăм ĕмĕр тата телей сунатăп.

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

---

Раççей Пенси Фончĕн Чăваш Республики тăрăх Муркаш районĕнчи управленийĕ тата «Раççей пенсионерĕсен союзĕ» регион уйрăмĕн Чăваш Республикинчи правленийĕ ячĕпе сире пĕтĕм халăх уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕпе хĕрӳллĕн тата чĕререн саламлатпăр! Аслă ăру çыннисене хисеплесси, вĕсен интересĕсемпе прависене хӳтĕлесси – Раççейпе Чăваш Енĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ задачисем.

Сире нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр, пирĕн обществăлла организаци ĕçне активлă хутшăнмалла пултăр.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**Раççей Пенси Фончĕн Чăваш Республики тăрăх Муркаш районĕнчи управленийĕн пуçлăхĕ.**
**В. КРАСНОВ,**
**«Раççей пенсионерĕсен союзĕ» регион уйрăмĕн Муркаш районĕнчи полномочиллĕ представителĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ĔÇПЕ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ХАКЛĂ ВАТĂСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕпе чун-чĕрĕрен саламлатăп. Сирĕн пурнăç çулĕ паянхи çамрăксемшĕн тивĕçлĕ тĕслĕх вырăнĕнче. Эсир Аслă Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхне хӳтĕленĕ, тылра мĕн пур вăй-хала парса ĕçленĕ. Вăрçă хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратас тесе ырми-канми тăрăшнă. Çак паттăрлăха, пархатарлă ĕçе нимĕнпе те танлаштарма çук.

Паян та эсир район пуласлăхĕшĕн çунса тăратăр. Эсир – ăс-хакăл, опыт, халăхăн йăли-йĕркисене упраканĕсем. Çитĕнекен ăрура патриотизмпа ĕçченлĕх туйăмĕсене çирĕплететĕр. Сирĕн умăрта эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Сирĕн пуян опыт пирĕншĕн çав тери хаклă. Эсир çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тунă, малалла çирĕппĕн утнă. Эпир паян сирĕнтен вĕренсе пыратпăр, йывăрлăхсене сирĕн пек чыслăн çĕнтерсе пыма тăрăшатпăр.

Районти ветерансен, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи пуян опытлă ватă çынсен Канашĕсем, вĕсен усăллă сĕнĕвĕсем пире малалла çул кăтартса пыраççĕ, ĕçре пулăшаççĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ.

Сире пурсăра та нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатăп. Çывăх çыннăрсен чун ăшшипе тимлĕхĕ, ăнланăвĕпе ырă кăмăлĕ ватлăхăра канлĕх кӳтĕр, вăй-хал патăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

---

**Хисеплĕ ветерансем!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Паян эсир çамрăксене хăвăрăн пĕлӳпе опыта паратăр, ĕçченлĕхе хăнăхтаратăр, вĕсенче патриотизм туйăмне çурататăр.

Хисеплĕ ветерансем, хастарлăхăршăн, çирĕплĕхĕршĕн, ырă кăмăлăршăн тата чăтăмлăхăршăн сирĕн умра çĕре çити пуç таятпăр. Çемье, ачасен, тăвансемпе çывăх çынсен юратăвне чăннипех тивĕç эсир. Çак юратăва упрăр, пурнăç энергине татах нумай çуллăха сыхласа хăварăр.

Сире пурсăра та ырлăх-сывлăх, телей, савăнăç тата ăнăçу сунатăп! Нумай çул хушши телейлĕ пурăнăр!

**Н. БУДАРИН,**
**РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, летчик-космонавт.**

# Пултараллă та маттур ветеран

***«Килĕрех, килĕр», – тесе ăшшăн кĕтсе илчĕ мана Зинаида Николаевна Кадыкова хăйĕн килĕнче. Çак пултараллă хĕрарăм пурнăçне шкулпа çыхăнтарнă. Чуманкасси ялĕнче пурăнать. Вăл Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотине, ĕç ветеранĕ ята илме тивĕçнĕ. Ăна шкулта та, ялта та хисеплеççĕ, юратаççĕ.***

**– Ачалăха таврăнар-ха, Зинаида Николаевна. Эсир ăçта çуралса ӳснĕ, ăçта вĕреннĕ?**

– Эпĕ Муркаш районне кĕрекен Ваçкасси ялĕнче хаяр вăрçă кĕрленĕ вăхăтра çуралнă. Килте мансăр пуçне тата икĕ ача çитĕннĕ. Эпĕ çуралнă хыççăн тепĕр уйăхран пирĕн атте фронтра вилни çинчен хыпар çитнĕ. Анне вара пирĕншĕн тĕслĕх пулнă. Мĕншĕн тесен вăл çумăрта та, хĕвел айĕнче те пуç çĕклемесĕр ĕçленĕ. Нихăçан та йывăр темен, пуçа усман, чăтнă. Хамăр та, ачасем, ăна курса ĕçлеме тăрăшнă. Хĕрарăмсемпе ачасен пысăк тӳпи те пур пирĕннисем вăрçăра çĕнтернинче.



Шкула питĕ каяс килетчĕ. Купăрля шкулĕнче 7 класс вĕреннĕ хыççăн Советски шкулне пĕтĕмĕшле пĕлӳ илме куçрăм. Вăл вăхăтра автобуссем çӳремен. Уй урлă яланах çуран утаттăмăрччĕ. Уроксем хыççăн колхоза çĕр улми пуçтарма çӳреттĕмĕр. Ывăннă пулсан та, килти ĕçе тумасăр нихăçан та шкула кайман, «виççĕ» паллăсем те илмен.

**– Мĕншĕн учитель профессине суйласа илнĕ?**

– Астăватăп, кĕçĕн класра вĕреннĕ чух пире учитель: «Çитĕнсен кам пулас килет?» – тесе ыйту панăччĕ. Эпĕ çавăн чухнех: «Вĕрентекен», – тесе хурав патăм. Çавăн хыççăн мана пĕр класра вĕренекенсем «учитель» теме пуçларĕç.

Эпĕ вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Клавдия Васильевнăна питĕ хисепленĕ. Унăн урокĕсене юратсах çӳренĕ. Манăн та ун пек лайăх учитель пулас ĕмĕт ӳссе çитиччен пуçра пулнă.

1960 çулта эпĕ Чăваш педагогика институтĕнчи ют чĕлхесен факультетне вĕренме кĕтĕм. Малтанах аслă шкулта вĕренме йывăрччĕ, кайран хăнăхса çитрĕм.

**– Чуманкасси шкулĕнче мĕнле майпа ĕçлеме пуçланă?**

– Пиллĕкмĕш курсра вĕреннĕ чухне мана Чуманкасси вăтам шкулне практикăна ячĕç. Шкулта эпĕ ачасемпе пĕр чĕлхе тупрăм. Институт пĕтернĕ хыççăн та çакăнтах ĕçлеме кăмăл турăм. Ку ялтах хамăн телее тупрăм, çемье çавăрса мăшăрпа иккĕн 5 ача çуратса ӳстертĕмĕр, ура çине тăратрăмăр.

Учитель пулса 36 çул хушши вăй хутăм. Халĕ те шкула чун туртать. Питĕ килĕшетчĕ мана унта. Вĕренекенсен ялкăшса тăракан куçĕсене аса илетĕп те... Уроксенче вăйă мелĕсемпе усă кураттăмччĕ. Вара уроксем хаваслă та интереслĕ иртетчĕç.

Уçă уроксенче ачасем активлă пулни, тулли хуравсем пани малалла ĕçлеме хавхалантаратчĕ, ĕçре аванрах ĕлкĕрсе пыма вăй-хал хушатчĕ.

– Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн вăхăта еплерех ирттеретĕр?

– Пахчара ĕçлеме юрататăп. Выльăх-чĕрлĕх те усратăп-ха. Мăнуксем те манăн саккăррăн. Вĕсене ӳстерме куллен пулăшса пыратăп. Кунсăр пуçне мана Чуманкасси ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи пулма та шанса пачĕç. Çапла ирттеретĕп вăхăта.

**– Учительсен кунĕ те çывхарса килет. Учительсене, уйрăмах çамрăккисене, мĕн суннă пулăттăр?**

– Ăнăçу, таса сывлăх, çутă телей сунатăп пурне те. Телей вара вăл анлă пĕлтерĕшлĕ, унта çемье те, юрату та кĕрет. Учителĕн кӳренме, çилленме васкамалла мар. Ачасем - ачасемех вĕсем... Ырă вара ырăпах таврăнать, усал – усалпа. Çавăнпа та пурнăçра ытларах ырă тума тăрăшмалла. Учителĕн кашни ачапах пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмалла мар. Чун ăшшине парнелемелле, ыйтнă чух вара çирĕпрех ыйтмалла. Ачасене чун-чĕререн юратмалла, хăвăн профессине те.

– Тавах Сире, Зинаида Николаевна, ăшă калаçушăн. Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕпе тата çывхаракан Учительсен кунĕпе саламлатăп, çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул сунатăп.

**Оля Павлова,**
**Чуманкасси шкулĕнче 11 «а» класра вĕренекен.**

## Техникăна – хĕллехи управа

# Ыранхи куна пăхса ĕçлер

Çĕр ĕçченĕ уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май Пукрав ăшши тытма хатĕрленет. Ку ĕç-хĕл уй-хир ĕçĕсене явăçтарнă ял хуçалăх техникишĕн те паян айккинче пулмалла мар. Çапла калатпăр, ăна ăнланатпăр, анчах ĕçне тума тăрсан... Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе лару-тăру çулленех йывăр. Вăл ĕç ун çине пĕччен-иккĕн çеç пăхсан çăмăлланмĕ те. Çавăнпа та çĕр-шывра агропромышленность комплексне аталантарассипе ĕçлекен наци проекчĕ вăй илсе пынă вăхăтра ял хуçалăх техникипе перекетлĕ те тирпейлĕ пулмалли кашни çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан тĕллев: кăçал уй-хирте ĕçленĕ техника çитес çул та хамăрах кирлĕ-çке. Çакна шута илсе ЧР Ял хуçалăх министерствипе çĕр ĕçĕнче ĕçлекен техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕ сентябрĕн 19-мĕшĕнче «АПКри организацисен машинăпа трактор паркĕсене тĕрĕслесси, ял хуçалăх техникине управа лартассипе ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем хушшинче смотр-конкурс ирттересси çинчен» пĕрлехи приказ кăларчĕç. Унпа килĕшӳллĕн техникăна хĕллехи управа лартассине тĕрĕслесси октябрĕн 1-24-мĕшĕсенче иртет. Çак тапхăрта комисси членĕсем хуçалăхсенче техникăпа епле усă курнипе, техникăна çĕнетесси çине епле пăхнипе, машинăпа трактор паркĕсенчи культурăпа, вырăнсене тимĕр-тăмăртан тасатассипе епле ĕçленипе, ĕç сыхлавĕпе тата ĕç хăрушсăрлăхне пăхăнассипе паллашĕç.

Район шайĕнче çакна валли йĕркеленĕ комисси ĕçне район хаçачĕ урлă тăтăш пĕлтерсе тăма хушнă.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**районти патшалăх техника надзор инспекцийĕн пуçлăхĕ.**

*Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ*

# 2009 çулта Республика кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин патшалăх уявĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи муниципалитет пĕрлĕхĕсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне малалла хавхалантарас, вĕсен инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. 2009 çулта Республика кунне уявлас енĕпе ирттерекен тĕп мероприятисене Шупашкар хулинче, çавăн пекех социаллă пурнăçпа культура, инженери, транспорт инфратытăмне аталантарас, ялсене тирпей-илем кĕртес ĕçе тата вĕсен архитектурăпа илемлĕх сăнне, çурт-йĕр тăвассин пахалăхне лайăхлатас енĕпе пысăк кăтартусем тунă Вăрмар районĕнче ирттерес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

2009 çулта Республика кунне йĕркелесе ирттерес енĕпе пурнăçламалли мероприятисен планне хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле, унта ют çĕршыв хăнисене йыхравласа форумсемпе фестивальсем, халăх пултарулăхĕн куравĕсене, конкурсĕсене ирттерессине пăхса хăвармалла;

Чăваш Республикин муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен Республика кунне уявлассипе çыхăннă мероприятисене вĕсен территорийĕнче ирттермелли право çĕнсе илмелли конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе килĕшӳллĕн Вăрмар районĕн администрацине ялсен общество инфратытăмне малалла аталантарма укçа-тенкĕ уйăрса памалла.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2009 çулта йăлана кĕнĕ «Акатуй» уявĕсем тата Республика кунне халалласа ытти культура тата спорт мероприятийĕсем ирттерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2008, авăн, 29, 99 №.

## Кĕскен

# Пысăк тухăç

Раççей ял хуçалăх министрĕ Алексей Гордеев пĕлтернĕ тăрăх, кăçал çĕр-шывра 95-100 миллион тонна тыр-пул пухса кĕртмелле. Кун пек пысăк тухăç юлашки вун пилĕк çул хушшинче пулман. Пухса кĕртнĕ тыр-пул, министр каланă тăрăх, халăха тивĕçтерме çителĕклĕ.

# Пĕрлехи экзамен çеç мар

Раççей вĕрентӳпе наука министрĕ Андрей Фурсенко шкул ачисен пĕлĕвне хаклама пĕрлехи патшалăх экзаменĕпе пĕрлех «портфолио» мелĕпе усă курассине асăннă. Кун пек чухне шкул ачи вĕренӳ çулĕсенче тĕрлĕ конкурссемпе олимпиадăсенче çĕнсе илнĕ грамотăсемпе дипломсене те шута илеççĕ. 9 класс хыççăн ирттерекен муниципаллă экзаменсен кăтартăвĕсене те манса хăвармаççĕ.

Хальлĕхе ку сĕнӳ. Вĕрентӳ министерстви çапла майпа ачасен пĕлĕвне хакламалли тулли майсем шырать.

## Вулакансене пĕлме

# Патшалăх Канашĕн депутачĕ Муркашсене йышăнать

2008 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче «Единая Россия» партин обществăлла йышăну пунктĕнче çынсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Виктор Александрович Морозов йышăнать. Суйлавçăсене тĕрлĕ ыйтусемпе 14 сехетрен тытăнса 16 сехетчен кĕтеççĕ. Обществăлла йышăну пункчĕ районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн çуртĕнче 2-мĕш хутра вырнаçнă. Ыйтусене 2-11-80 телефонпа та пама пулать.

## Юбилей

*Саламлатпăр*



Мулкачкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, нумай çул хушши Муркашри кирпĕч заводĕнче вăй хунă **Елизавета Порфирьевна СКВОРЦОВАНА** 70 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Смеловсен, Пушковсен çемйисем.**

---



Хисеплĕрен те хисеплĕ мăшăрăма, аттене, кукаçине, асаттене – Чуманкасси ялĕнче çуралнă **Леонид Степанович БЕЛОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем.**

---

Хаклă та юратнă тăвана, Хупахушкăнь ялĕнче пурăнакан **Леонид Степанович БЕЛОВА** сумлă юбилейпа – 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Ваçкассинчи Павловсемпе Кĕртекассинчи Михайловсем.**